Июнĕн 8-мĕшĕ - Социаллă сферăра ĕçлекенсен кунĕ

Ĕçе тивĕçлĕ шайра пурнăçлаççĕ

Пирĕн районта çынсене социаллă пулăшу парас енĕпе ЧР Сывлăха сыхлас тата социаллă аталану министерствин районти социаллă хӳтлĕх пайĕнче социаллă пулăшу паракан центр ĕçлет. Çак центр тĕрлĕ ӳирăмсенчен тăрать. Ватăсене тата инвалидсене килте пулăшу паракан ӳирăмсем иккĕ. Унти çынсем тăрăшнипе пулăшу илекенсем хăйсене хӳтĕленине, прависемпе интересĕсене мала хунине туйсах тăраççĕ. Ватăсемпе инвалидсене хăвăрт пулăшу парассипе тепĕр ӳирăм ĕçлесе пырать. Тепĕр чухне пулăшу питĕ кирлисем çакăнти специалистсем патне ыйтусемпе килеççĕ. Кунта вĕсене çийĕнчех памалли пулăшăва вăраха ямаççĕ. Çакăн пек пулăшусем ватăсемпе инвалидсен пурнăçĕнче тĕкĕ пулса тăраççĕ. Кунсăр пуçне çак категориллĕ çынсене вăхăтлăх пурăнма Мăн Сĕнтĕрте тата Турайра ӳирăмсем пур. Вĕсенче вăхăтлăх 30 çын пурăнма пултарать. Килти пек условисем, апат çитерни тата пушă вăхăта йĕркелесе пыни çак çуртсенче лайăх шайра пулса пырать.

Асăннă центрăн тытăмĕнче пĕтĕмпе 12 специалист тата 120 социаллă ĕçчен вăй хураççĕ.

Муркаш районĕнче ватăсене, инвалидсене тата ветерансене социаллă пулăшу паракан центрсăр пуçне тата 3 учреждени пур: «Йӳçкассинчи ватăсемпе инвалидсен çурт-интерначе», «Каршлăхри вăрçă тата ĕç ветеранĕсен çурт-интерначе», «Шомикри психоневрологи интерначе» .

373 çын 80 çултан иртнĕ ватăсене, 1-мĕш группа инваличĕсене тата инвалид-ачасене Раççей Пенси Фончĕн районти управленийĕ урлă пулăшу парса тăрать.

Пирĕн районта кăçалхи июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне 10198 пенсионер тата инвалид шутланса тăрать. Вăл шутран Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннисем тата инвалидсем - 153 çын, вăрçăра вилнисен арăмĕсем - 33, тыл ĕçченĕсем - 2357, ĕç ветеранĕсем - 5198.

Пĕччен пурăнакансем те районта чылай - 802 çын. Вĕсенчен 120 çынна 118 социаллă ĕçчен килĕсенче пăхса тăрать.

Эпир хамăр ĕçе кирлĕ шайра тытса пымашкăн район администрацийĕн тĕрлĕ пайĕсемпе, районти тĕп больницăпа тачă сыхăнса ĕçлетпĕр. Социаллă пулăшу памалли ĕç хăйне май питĕ явапла. Кунта ĕçлекенсем ăна кашни кунах туйма пултараççĕ. Вĕсене те пĕрпĕринпе канашласа ĕçлесе пыни куллен пулăшса пырать. Çавăнпа та умри ыйтусене те вăхăтра татса паратпăр.

10-20 çул каялла социаллă пулăшу парас ĕçре питĕ хастар та ăста специалистсем ĕçлени те пире малалла туртать. Яланах ăшă сăмахсемпе Екатерина Павловна Микешкинана (Иванована) аса илетпĕр (сăн ӳкерчĕкре). 19 çултах Муркаш районĕнчи социаллă пулăшу пайĕнче (1966-мĕш çулта) ĕçлеме тытăннă. Малтан Челябинскри юридици техникумне вĕренме кĕнĕ, каярах Чулхулара Мускав юридици институтĕнче вĕренсе аслă пĕлӳ илнĕ. 1977-мĕш çултан пуçласа Екатерина Павловна Муркаш райĕçтăвкомĕн социаллă пулăшу паракан пай ертӳçинче тăрăшнă. Вăл ĕçленĕ вăхăтра, 1985-мĕш çулта, районта пĕччен ватăсене тупса палăртас ĕç активлă пуçланнă. Виçĕ уйăх хушшинче социаллă пулăшу паракан пайра ĕçлекенсем çакнашкал кашни çын патĕнче пулнă (800 çынна яхăн). Çакăн хыççăн питĕ кивĕ те сивĕ пӳртсенче пурăнакансем валли пилĕк çул хушшинче 19 çĕнĕ пӳрт çĕкленĕ, 40 яхăн çуртра юсав ĕçĕсем ирттерме пултарнă. Апла пулин те пĕччен пурăнакан çынсен канăç паман ыйтăвĕсем татах та нумай пулнă-ха.

1990-мĕш çулсен пуçламăшĕнче ветерансен çурчĕсем уçăлма тытăннă. Турайра хута янă ветерансен çурчĕ республикăра иккĕмĕш пулнă. Малаллахи икĕ çул ветерансен çурчĕсем Мăн Сĕнтĕрте тата Тренккăра ватăсене йышăнма пуçланă. Кунта вырăнпа вырăтакан пĕччен ватăсене çеç пурăнтарнă.

Укçа-тенкĕ енĕпе йывăр пулнă. Ĕç укçине те вăхăтран вăхăта çеç илнĕ. Тĕрлĕ хуçалăхсем, учрежденисемпе предприятисем пулăшса тăнă. Çапла виçĕ çул хушшинче пĕччен пурăнакансен çивĕч ыйтăвне татса панă.

Çак ĕçе парăннă хастар хĕрарăм пай ертӳçинче вăй хунă чух кунти ĕç коллективĕ республикăри 28 район хушшинче иртекен социаллă ăмăртусенче малти вырăнсенче пулнă.

Екатерина Павловна 32 çул (ертӳçĕре - 20 çул) çынсене социаллă пулăшу парас ĕçре тимленĕ. Паянхи кун та вăл ĕçтешĕсене ăнланулăхпа пулăшушăн тав сăмахĕ калать. Хăйĕн ырă тĕслĕхĕпе вара çамрăксене ума пысăк тĕллевсем лартса вĕсене пурнăçлама вăй парса тăрать.

Н. ПЕТРОВА,
ЧР Сывлăха сыхлас тата социаллă аталану министерствин районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи.

Çемье çулталăкĕ

«Пӳрте кĕрсен мĕн сас лайăх? Ача-пăча сасси лайăх...»

Чăнах та, çак сăмахсем питех те вырăнлă. Юлашки çулсенче Москакасси ял тăрăхĕн территорийĕнче ачасем çураласси ӳссех пырать. Ку вара пирĕн малашлăхшăн лайăх япала. Çакна шута илсе Москакассинчи Культура çуртĕнче çулленех Ачасене хӳтĕлемелли кун пысăк уяв ирттереççĕ.

Кăçал та ырă йăлана пăсмарăмăр. Палăртнă вăхăта зал ача-пăча сассипе тулчĕ. Кунта пĕлтĕрхи июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа кăçалхи июнĕн 1-мĕшĕччен çуралнă ачасене ашшĕ-амăшĕсемпе чĕнтĕмĕр. Пухăннисене саламлама «Колокольчик» ача сачĕн ачисем те çитрĕç. Вĕсем илемлĕ юрăсемпе савăнтарчĕç (ертсе пыраканĕсем Е.Ф. Смирнова, В.С. Макарова). Ташă ушкăнне çӳрекенсем хитре ташăсем парнелерĕç (ертсе пыраканĕ И.В. Петрова). Даша Макарова вара хăйĕн çепĕç сассипе пурне те тыткăнларĕ.

Çакăн пек уявсем çамрăк çемьесене пĕтĕçтереççĕ, пĕрпĕрне ăнланма пулăшаççĕ, хаклама вĕрентеççĕ.

Уявсене паян спонсорсемсĕр те йĕркелеме çук. Тулли кăмăлпах П.Т. Терентьев, И.П. Терентьева, Н.Л. Царев тата Н.В. Еропанов ачасене савăнăç парнелерĕç. Вĕсем пулăшнипе хаваслă та кăмăллă иртрĕ çак уяв. Çавăнпа та вĕсене пĕтĕм ашшĕ-амăшĕ, хĕрарăмсен канашĕ ячĕпе питĕ пысăк тав сăмахĕ калатпăр.

Г. ГОЛУБЕВА,
Москакассинчи Культура çурчĕн директорĕ.

Сăн ӳкерчĕкре: сцена çинчен хаваслă ача-пăча сасси янăрарĕ.

Районăмăр маттур çыннисемпе пуян

Çакă мар-и вара телей?

– Паян мăнук килмелле-ха хуларан.

Çак шухăшпа васкасах Перасковья Викторовна кукăль пĕçерме тесе чуста хурса лартрĕ. – Ара, ĕçленĕ чух килте ачасене пăхма та вăхăт пулман-çке. Мĕн 1962 çултан пуçласах районти тĕп больницăра операци медсестринче вăй хунăскерĕн, килте ачасене пăхма та вăхăт пулман ытларах чух. Халь ак, тивĕçлĕ канура пулнă май, мăшăрĕпе Николай Петровичпа чун каниччен кил-тĕрĕшри ĕçсемпе аппаланаççĕ.

Ĕç биографийĕ вара Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Уçăпкассинче çуралса ӳснĕ П.В. Клементьеван (хĕр чухнехи хушамачĕ – Викторова) 1957 çулта пуçланчĕ. Мĕншĕн шăпах çак профессие суйласа илтĕр тесен вара Перасковья Викторовна шухăшĕпе ачалăха таврăнать. 11 ачаран 5-ĕн çеç çитĕнчĕç вĕсем. Ыттисен тĕрлĕ ӳсĕмре тĕрлĕ чире пула пурнăçĕ татăлнă. Çакăн чухнех инкеке лекнĕ çынсене пулăшас туйăм çуралнă пулĕ. Хăйпе пулса иртнĕ тĕслĕх вара пурнăç çулне суйлассинче татăклă самант пулчĕ. Вăл чи кĕçĕнни пулнăскер, пĕррехинче ӳпне çăпан тухнине пула утаймиех пулса ларчĕ. Телее, тăванĕсенченех тухтăр пурччĕ. Шăпах вăл сиплесе ура çине тăратрĕ те ĕнтĕ ăна ун чух. Шел, çав темиçе сыпăкри Манефа аппăшĕ вăрçă пĕтнĕ хыççăн киле çитеймерĕ, пуйăс сирпĕннине пула пурнăçĕ татăлчĕ. Викторовсен кĕçĕн хĕрĕ Праски вара шур халатлă сывлăх хуралçин профессине суйлама татăклах тĕв турĕ. Медицина сестрин профессине алла илнĕ хыççăн тӳрех районти тĕп больницăра ĕçлеме пуçларĕ.

Ун чухне, 1958-1961 çулсенче, районта трахома чирне хирĕç вăйлă кĕрешнĕ. Аслă ăрури çынсем аванах астăваççĕ пулĕ-ха, райпон усă курман çурчĕ пурччĕ. Шăпах çавăнта 100 çынран кая мар çынна сипленĕ те. Коридорăн пĕр енче арçынсем, тепĕр енчи вырăнсем çинче – хĕрарăмсем. Шутласа пăхăр хăвăрах, кашни çыннăн кашни куçне кунне пилĕк хутчен эмел янă. Ларса канма та вăхăт пулман. Ку çеçи? Ялсене мĕн чухлĕ тухса çӳренĕ тата. Шарпаш, Турай, Чуманкасси тăрăхĕсем çамрăк медсестра Перасковья Викторовна кашни киле кĕрсе кашни çынна трахомăран тĕрĕслесе пăхса тăнине паян та манман. Çулла – çуран, хĕлле–лашапа. Тав Турра, 1961 çулта парăнтарчĕçех çак чире. Пултаруллă ĕçĕшĕн ун чух Перасковья Викторовнăна районти тĕп больницăн тата, хальхи пек каласан, район администрацийĕсем тав турĕç, районти Хисеп хăми çине кĕртрĕç.

Хăй ĕçне чунтан тăвакан специалиста ертӳçĕ ăçтан ан асăрхатăр-ха? Ун чух тĕп врачра ĕçлекен Н.А. Аршуткин окулист П.В. Викторована операци сестри пулма сĕнçен хирĕçлемест.

–Ăçта ярса, çавăнта кайса, – тет паян çав вăхăтсене аса илсе Перасковья Викторовна.

1962 çулхи март уйăхĕнче 4 уйăхлăх курса каять, хыççăн операци сестри пулса тăрать. Канăç мĕнне пачах манма тивет çамрăк медсестран. Паянхи пекех астăвать-ха вăл йывăр çын хĕрарăма операци тунине. Маткăран хырăма тухса ӳкнĕ ачана çăлма май килмерĕ пулин те, амăшне вилĕм аллинчен туртса

илчĕç-илчĕçех. Сахал пулнă–и çакăн пек тĕслĕхсем. Кил пирки шутлама та вăхăт пулман. Юрать-ха мăшăрĕ Н.П. Клементьев юратнă арăмĕн ĕçне ăнланатчĕ. Пĕр класра вĕреннĕ чух çуралнă юрату çирĕп пулчĕ вĕсен. 1963 çулта пĕрлешнĕскерсем, паян та шăкăл-шăкăл пурăнаççĕ. Декретлă отпуска тухсан та мăшăрне больницăна операцие чĕнсе кăларсан, ма каян теместчĕ упăшки.

Ку кăна-и? Мĕн чухлĕ пулнă тата мунчара ачасене çума пуçласан пăрахса больницăна операци тума тухса чупнисем. Çавăнпах пулĕ ачисем те пĕчĕклех ĕç çумне çыпăçса ӳсрĕç. Пĕррехинче çапла амăшне япала çума пуçласан больницăна чĕнсе кайрĕç те, кĕçĕн çулсенчи аслă хĕрĕ амăшне пулăшма шутларĕ, пĕчĕк йăмăкне те хăех çурĕ. Унтан юнашар ларакан урай çумалли витрене илчĕ те япала çума пуçларĕ. Амăшĕ ывăнса килет-çке. Малтан трико-сене çурĕ. Пĕр пуçланăскер, шур тĕслĕ япалисене те чӳхесех хума шутларĕ. Çав шыврах çурĕ, чӳхерĕ. Амăшĕ кайран, çĕрле, хĕрĕ çывăрса кайсан, куççулĕ-кулă витĕр çĕнĕрен çунине сисеймерĕ мăнтарăн. Ирпе кăмăл тулли хăй пысăк ĕç туни çинчен каларĕ. Районти тĕп больницăра анестезиолог-реаниматолог пулса ĕçлекен Г.Н. Кузнецова паян амăшĕ больницăра ĕçленĕ вăхăта çапла аса илет:

Каç çывăрма выртатпăр – анне ĕçре, ир тăратпăр – анне каллех çук.

Амăшне курас тесе больницăна кайсах ĕнтĕ вăл врач пулма шутларĕ. Каникулта чух санитаркăра та ĕçлетчĕ. Чăваш патшалăх университечĕн студенчĕ пулнă чухне те шăмат кун киле килсен амăшне йăпăр-япăр курма çукчĕ. Амăшĕ больницăра, юратнă ĕçре. Амăшĕ вырăнне пулса Галина кукăль пĕçеретчĕ, кĕçĕн йăмăкне пăхатчĕ. Ашшĕпе пĕрле. Паллах, вăл килте чух. Ашшĕ те, Муркаш шкулĕнче ачасене физикăпа вĕрентнĕскер, кунĕпех шкултаччĕ. Хыççăн – общесвăлла ĕçсем.

Медицина ĕçченĕн пурнăçĕ мĕнле канăççăррине курса тăрсах Галина амăшĕн çулĕпех кайрĕ. Студент чухнех унран хĕр тусĕсем çаплах калатчĕç:

– Хăв шăпуна суйларăн ачусем валли.

Ку чăннипех те çаплах. Е Галина Николаевна хăй дежурствăра, е мăшăрĕ Юрий Александрович хирург йывăр операцинче. Кузнецовсен сахал-и лекет дежурство пĕрле? Хĕрĕпе ывăлĕ те амăшĕ пĕчĕк чухнехи пекех хăйтĕллĕнлĕхе, сывлăх хуралçин ĕçне хаклама вĕренсе ӳсеççĕ. Асли ав, Ирина, кукамăшĕ пек, ашшĕпе амăшĕ пек, медицинăнах суйларĕ: 2 курс студенчĕ, тухтăр пулма вĕренет Шупашкарти университетра.

Мĕн-ма савăнас мар Перасковья Викторовнан? Кĕçĕн хĕрĕ Татьяна та пурнăç çулне хăй кăмăлланинех суйларĕ. Малтан Хусанти культура институтне пĕтерчĕ, хыççăн тепĕр аслă пĕлӳ илчĕ – юрист. Çĕнĕ Шупашкарта ĕçлет.

Ĕçлени те харама каймарĕ П.В. Клементьеван. Мăнукĕсем те унăн профессине суйлаççĕ пулсан. 1998 çулччен 36 çул хушшинче кама кăна пулăшмарĕ пулĕ вăл пурнăç илемне çĕнĕрен курма? 1982 çулччен операци сестринче пĕччен ĕçлерĕ вăл. Çак çултан пуçласа унпа пĕрле операци сестринче ĕçлеме пуçланă П.И. Лукоянова Перасковья Викторовна пирки яланах ырăпа асăнать:

– Яланах ырă сĕнӳ паратчĕ вăл. Унран вĕренмелли паян та сахал мар, – тет вăл.

1987 çулта вăхăта тăсмасăр тумалли операционнăй уçăлчĕ.

– Малтан операцисене хуларан тухтăрсем чĕнсе илеттĕмĕр пулсан, каярахпа лару-тăру пач улшăнчĕ. Паллама пăрахрăмăр хуласене: хамăрăн хирургсемех халь темле операци те тăваççĕ, – мăнаçланать паянхи ĕçтешĕсемпе Перасковья Викторовна.

Перасковья Викторовнан ĕç кĕнекинче пĕтĕмпе те икĕ йĕрке: медсестрана ĕçе илнĕ, тивĕçлĕ канăва тухнă. Ан тив, пысăк наградăсем те, званисем те çук унăн. Пурнăçри чи кирли урăххи-çке. Сана ăнланни, юратни, хăвпа ху кăмăллă пулни. Перасковья Викторовна паян мăшăрне, ачисене чĕререн тав тăвать: ăнланнăшăн, пулăшнăшăн, пурнăçра хăй тупнă вырăнта тулли кăмăлпа ĕçлеме хавхалантарнăшăн. Тата мĕнле медальпе танлаштарăн хăв вилĕмрен çăлнă, пулăшнă çынсен хисепне?

– Кам сана операци тунă? – тесе ыйтнă пĕррехинче хирург чирлĕ çынран.

– Перасковья Викторовна, – тенĕ лешĕ кăмăллăн.

Ун чухне çеç-и, паян та çапла аса илекенсем сахал мар ăна. Кунтан хакли, чапли çук та виçĕм кун 70 çул тултарнă П.В. Клементьеванăшăн. Паян ăна çак сумлă юбилейпа саламлама пӳрт тулли тăванĕсем, тус-юлташĕсем, ĕçтешĕсем пуçтарăнаççĕ. Мăшăрĕпе ачисем, кĕрӳшĕ, мăнукĕсем вара ăна çĕр çинчи мĕн пур ырă туйăмсемпе саламласа ун умĕнче çĕре çити пуç таяççĕ.

–Тавах сана, мăшăрăм, аннеçĕм, кукам, эс пурришĕн, – теççĕ. Перасковья Викторовнана телейлĕ те вăрăм ыр кун-çул сунаççĕ. Çакă марим вара вăл телей? Нимле наградăпа танлаштарма çук телей. Çаках пуль...

Л. ПАВЛОВА.

Сăн ӳкерчĕкре: П.В. Клементьева (сылтăмра) пĕрле ĕçленĕ юлташĕпе.